25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 13 ЭРНЕКУН 265 (6200) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## „Эпир Совет ҫӗрне гитлерла ирсӗрсенчен тасатма пултаратпӑр тата тасатма тивӗҫ те“. (Сталин).

## Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе хӑварар

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн малтанхи ултӑ уйӑхӗ хушшинче пирӗн республикӑри промышленноҫпа транспорт та паллӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ, пирӗн фабрикӑсемпе заводсем, артельсемпе мастерскойсем хӑйсен ӗҫне лайӑхлатрӗҫ. Черничкинпа Челноков юлташсем главнӑй инженерсем пулса тӑракан заводсем Хӗрлӗ Ҫарпа халӑх хуҫалӑхне кирлӗ продукцисене уйӑхран уйӑха ытларах кӑларса тӑраҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхсенчи ӑмӑртура производствӑллӑ ҫитӗнӳсем тунӑшӑн асӑннӑ заводсен коллективӗсем Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе хӑйсене ертсе пыракан Халӑх Комиссариачӗсен премийӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Пирӗн предприятисем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн хӗрӳллӗ тапхӑрӗнче—Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура—уйрӑмах пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Совет революцийӗ XXV ҫул тултарнине тивӗҫлипе паллӑ тӑвассишӗн кӗрешни чылай фабрикӑсемпе заводсен коллективӗсене иртнӗ уйӑхри ӗҫсен планне ӑнӑҫлӑн тултарма пулӑшрӗ. Октябрьти производство программине Н-ски заводсем срокчен тата ытлашшипех, Канашри вагонсем юсакан завод 133 процент тултарчӗҫ. Аслӑ Октябре ҫавӑн пекех Куславкка Ҫӗмӗрлери комбинатсем, Шупашкарти пирӑвӑр, чӑлха, табак, макарон фабрикисем тата ытти чылай предприятисем хӑйсен уйӑхри ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленипе паллӑ турӗҫ.

Анчах малта пыракан предприятисен ҫакна асра тытас пулать: ӑмӑрту пӗрмаях малалла кусмалла пулӗтрет, тунӑ ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ӗҫлеме ларма масть, ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ӗҫсем тӑвас пулать. Фронт пирӗн промышленноҫран ытларах та ытларах продукци ыйтать, фабрикӑсемпе заводсен ӗҫлемелле, талӑкри графикпа производствӑн ҫирӗп законӗ туса хумалла. Ӗҫри тикӗслӗхӗр, ҫирӗп графикӑр, дисциплинӑрӑр малалла каймалла сук. Кашни предприятирех, кашни цехрах тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, хӑвӑртлӑхсене ӳстерсе пыни кирлӗ. Ахаллӗн кая юлма пулать. Ҫакна ӑмӑртӑвӑн нумай примерӗсем ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Шупашкарти эрех завочӗ, ку таринччен плана тултарса пынӑскерех, октябрьте хӑвӑртлӑха ӳстермен пирки, плана тултараймарӗ.

Ҫирӗп графиксӑр, ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлени апат-ҫимӗҫ промышленность, уйрӑмах вырӑнти промышленность халӑх комиссариачӗсен системине кӗрекен предприятисенче палӑрать. Асӑннӑ промышленность халӑх комиссариачӗсен предприятийӗсем уяв умӗнхи ӑмӑртура хӑйсен ӗҫне лайӑхлатрӗҫ пулин те, октябрьти производство планне районсенчи 16 промысла комбиначӗ, 2 апат-ҫимӗҫ комбиначӗ тултараймарӗҫ. Шупашкар хулинчи, Калинински, Канаш, Первомайски, Сӗнтӗр, Етӗрне тата Шӑмӑршӑ районӗсенчи промкомбинатсем пӗрмаях начар ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫакна калас пулать: вырӑнти промышленность халӑх комиссариатӗнчи ертсе пыракан работниксем хӑйсен предприятийӗсене кивӗлле ертсе пыраҫҫӗ, вӗсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртӑва тивӗҫлипе организацилемен, партин 18-мӗш конференцийӗ ыйтнӑ пек плана кашни комбинат тӑрӑх тултармалла тӑвассишӗн кӗрешмеҫҫӗ. Парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем хӑйсен районӗсенчи промышленность предприятийӗсем мӗнле ӗҫленипе сахал интересленеҫҫӗ, вӗсем ҫине ҫителӗксӗр ҫавӑрӑнса пӑхаҫҫӗ.

Промысла кооперацийӗн артелӗсемпе мастерскойӗсем те социализмлӑ ӑмӑртура паллӑ ҫитӗнӳсем тунинех курма ҫук. Республикипе те 3—4 артель кӑна—Октябрьски районри «Труд», Канашри «Авангард», Шупашкарти «Красный мебельщик» тата Куславкка районӗнчи Клара Цеткин ячӗпе тӑракан артельсем—мухтава тивӗҫлӗ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах вуншар артельсемпе мастерскойсем юлса пыраҫҫӗ, ӗҫҫыннисем валли кулленхи кирлӗ таварсене ҫителӗксӗр туса кӑлараҫҫӗ.

Республикӑри промысла кооперацийӗ малашне те хальхи пекех ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫленине тӳсме ҫук. Промысла союзӗсен председателӗсен Андреев, Гордеев тата Писарева юлташсен артельсен ӗҫӗсене ҫитес вӑхӑтрах лайӑхлатас, ҫапла майпа 1942 ҫулти производство планне пӗтӗмӗшпех тултармалла тӑвас тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла пулать.

Сталин юлташӑн доклачӗ ӗҫри ҫӗнӗ ҫӗкленӗве пуҫарчӗ. Пирӗн предприятисенчи рабочисемпе работницӑсем татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Н-ски заводри Кинзбургский юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ ҫулпуҫ сӑмахне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн графика кашни кун ирттерсе тултарать. Коллектив иртнӗ вунӑкунлӑхри задание 9 кун хушшинче тултарнӑ. Уйрӑм стахановецсем, сӑмахран, Люминарская, Капульсевич юлташсем нормӑран 3—4 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Рабочисен ӗҫри ҫакӑн пек хӑватлӑ ҫӗкленӗвӗ республикӑри ытти предприятисенче те палӑрать. Ҫулпуҫ лартнӑ задачӑсене пурнӑҫлас тесен, паян ӗнерхинчен, ыран паянхинчен лайӑхрах ӗҫлемеллине рабочисем лайӑх ӑнланаҫҫӗ.

Пирӗн промышленноҫпа транспорт умӗнче халӗ ҫӗнӗ те пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Фронтпа ҫӗршыва мӗн кирлине пурне те тата вӑхӑтра парса тӑрас тесен, фабрикӑсемпе заводсен кунран кун ытларах продукци туса кӑларас пулать, чӗртавара, топливӑна, электроэнергие перекетлес пулать, рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес пулать. Железнодорожниксен хисеплӗ задачи—вӑрҫӑн иккӗмӗш хӗлӗнче поездсене ҫирӗп графикпа ҫӳретесси. Хӗрлӗ Ҫара хӑйӗн хӑвӑртлӑхӗсене пурнӑҫласа пыма валли чугунҫул транспорчӗн лайӑхлатса пулать.

Ҫак задачӑсене пурнӑҫлама кирлӗ майсемпе ресурссем пирӗн ҫителӗклӗ. Совет правительстви большевиксен партийӗ пуллен вӗрентсе ҫул кӑтартса тӑраҫҫӗ. Тӗп ӗҫе тата парасси ӑмӑртан—промышленноҫпа транспортри работниксенчен килет. Пирӗн малашне ӗҫре татах та тимлӗрех, пуҫтарулӑрах, дисциплинӑллӑрах пулас пулать, кашни минутӑна, кашни грамм чӗртавара, кашни винта перекетлес пулать, вӑя шеллемесӗр, вӑхӑта пӗлмесӗр ӗҫлес пулать. Пирӗн ретре ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлекенсем, халӑх пурлӑхне типтерсӗр тытакалакансем, ӗҫ дисциплинине пӑсакансем пачах та ан пулччӑр.

Ӗҫри ҫирӗплӗхпе пуҫтарулӑх—умри задачӑсене татса памалли май!

Ҫулпуҫ доклачӗпе тата приказӗпе хавхаланса ирттернӗ митингсемпе пухусенче предприятисен коллективӗсем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Пирӗн рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем ҫитес уйӑхсенчи плансемпе заданисене ирттерсе тултарма, чӗртаварсемпе материалсене, топливӑпа электроэнергие перекетлеме, ударниксемпе стахановецсен ретне ӳстерме пулаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи пур цехсен коллективӗсем те ҫак уйӑхри плана ирттерсе тултарма пулнӑ. Ҫавӑн пек татӑклӑ обязательствӑсем республикӑри чылай предприятисен коллективӗсем илеҫҫӗ.

Анчах обязательствӑсем илнипех ӗҫ пӗтмест, вӗсене пурнӑҫа кӗртес пулать. Ҫавӑнпа та промышленноҫпа транспортри партипе хуҫалӑх руководителӗсен уйрӑм коллективсем илнӗ обязательствӑсем пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, ҫак ӗҫри чӑрмавсене сирме, тытӑннӑ ӗҫе вӗҫне ҫитерме пулӑшмалла. Унсӑр пуҫне тата малта пыракан предприятисен, цехсен бригадӑсен, рабочисен ӗҫ опытне пӗтӗм промышленноҫпа транспорта сармалла, кашнинех вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек ӗҫлеме вӗрентмелле. Ҫакӑ вӑл промышленность наркомачӗсемпе парти организацийӗсен хисеплӗ тивӗҫӗ пулса тӑрать.

Пирӗн промышленноҫпа транспортри работниксемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем, юратнӑ ҫулпуҫӑн Сталин юлташӑн ҫулӑмлӑ сӑмахӗсемпе хавхаланнӑскерсем, совет тылне ҫирӗплетессишӗн, тӑван Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассишӗн, Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура тунӑ паха ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе хӑварса, малашне татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлӗҫ.

### ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

### Ф. В. Васильев юлташа Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма уйӑрса лартасси ҫинчен

Федор Васильевич **Васильев** юлташа Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ пулма уйӑрса лартас.

**Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.**

**Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑвакане**

**А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули. 1942 ҫулхи ноябрӗн 12-мӗшӗ.

### Производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗкленӳ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Ямурзино ялсоветӗнчи колхозсенче колхозниксемпе колхозницӑсем Сталин юлташӑн докладне пысӑк хавхаланупа сӳтсе-явнӑ. «Ямурзино» колхоз членӗсем, Сталин юлташӑн докладне хавхаланса, пӗтӗм тырпула ноябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне ҫапса пуҫтарма пулчӗҫ.

Колхоз паянхи куна 337 гектар ҫинчи тырра ҫапса пӗтернӗ, государствӑна тырӑ парса татнӑ, Хӗрлӗ Ҫар фондне 96 центнер тырӑ хывнӑ. Аван ҫапса ҫӗртсе кулленех 80 колхозник ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлет. Молотилкӑна кӗлте парса тӑракан колхозница М. Петрова юлташ талӑкри нормӑна тӑтӑшах икӗ хут ирттерсе тултарать. Вӑл кӑҫал 243 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Кӗлте йӑтса панӑ ҫӗре 50 ҫултан иртнӗ ватӑ колхозница В. Тимофеева юлташ пысӑк тӳсӗмлӗхпе ӗҫлет. Колхозниксем хастарлӑн ӗҫленипе молотилка кулленех 9-шар гектар ҫинчи тырра ҫапса кӑларать.

«Ямурзино» колхоз членӗсем кӑҫал тӑрӑшса ӗҫлесе вайлӑ тырпул туса илнӗ. Вӑтам пуҫна гектартан ыраш—13 центнер ытларах, кӗрхи тулӑ—15 центнер, пӑрҫа—11 центнер, кантӑр вӑрри—7 центнер тухать. Тырпулсене пуҫтарса кӗртнӗ чухне пӗр тӑках та туман.

Пархатарлӑ ӗҫӗн тупӑшӗ те пысӑк. Колхозниксем кашни ӗҫкунӗ ҫине кӑҫал вӗҫшер килограмм тӗштырӑ илеҫҫӗ. Стахановец-колхозниксем 50—60-шар пӑт тӗштырӑ, нумай пахча-ҫимӗҫ илеҫҫӗ. Д. Васильев колхозникӗн ҫемьи кӑҫал 1.200 ӗҫкунӗ тунӑ. Стахановла ӗҫленӗшӗн ҫемьи пахча-ҫимӗҫсем пуҫне 113 пӑт илнӗ.

Шупашкар районӗнчи Иккассинчи «Маяк 1-мӗшӗ» колхоз членӗсен пуҫарӑвӗпе «Ямурзино» колхоз колхозникӗсем республикӑри пӗр заводӑн рабочийӗсене государство хакӗпе сутма хӑйсен тупӑшӗсенчен 300 пӑт ҫӗрулми, 200 пӑт купӑста, 20 пӑт сухан уйӑрса панӑ. Хӗрлӗ Ҫар фондне тата 48 килограмм аш-какай, 8 килограмм ҫу, 116 пӑт сухан, 13 килограмм махорка ярса пачӗҫ. Вӗсене валлиех ӑшӑ тумтирсем хатӗрлеме 37 килограмм ҫӑм, 103 тир тата ытти ӑшӑ япаласем пухнӑ.

**С. ШАДИН.**

### Йӑлтах фронт валли

ВӐРМАР, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (Телефонпа). ВКП(б) райкомӗ тата партипе комсомол пуҫламӑш организацийӗсем хӑйсен умне Сталин юлташӑн докладне кашни ҫын патне хӑвӑртрах ҫитерес задача лартнӑ. Районри учрежденисемпе колхозсенче, чугунҫул станцийӗнче ӗҫҫыннисен митингӗсем пухӑвӗсем пулса иртнӗ. Сталин юлташ докладне колхозсенче, колхоз фермисенче сӳтсе-явнӑ. ВКП(б) райкомӗ Сталин юлташ докладне ӑнлантарса пама партипе комсомол организацийӗсен секретарӗсене, ялсоветсемпе колхозсен председателӗсен семинарне ирттернӗ, партипе совет активӗнчен 34 ҫынна колхозсене докладне пиллӗкунлӑхра командировкӑласа янӑ.

Сталин юлташӑн докладне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, Вӑрмар станцин коллективӗ грузсем тиемелли задание кулленех йӗркеллӗн пурнӑҫласа пыма, паровозсем ҫине топливо тиесе тӑрас ӗҫе хӑвӑртлатма, поездсене вӑхӑтра кӗтсе илсе ӑсатма обязательство илнӗ.

Ҫулпуҫӑн историллӗ доклачӗпе паллашнӑ май, колхозниксемпе колхозницӑсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хӑвӑртрах вӗҫлес тӗлӗшпе ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ. Кивӗ Вӑрмарти «Большевик» колхоз членӗсем, сӑмахран, октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне государство умӗнчи обязательствӑсене пурнӑҫлама, аван ҫапса пӗтерме пулнӑ. Колхоз юлашки кунсенче тӑтӑшах хатӗрлев пунктне хӗрлӗ обозсемпе вуншар лав тырӑ леҫсе тӑрать, кунӗн-ҫӗрӗн, пӗр чарӑнмасӑр аван ҫапать. «Большевик» колхоз членӗсем ҫак кунсенче оборона завочӗсенчи рабочисене государство хакӗпе 4 тонна пахча-ҫимӗҫ сутрӗҫ.

— Йӑлтах фронт валли, йӑлтах ҫӗнтерӳ тума,—ҫак лозунгпа ӗҫлеҫҫӗ районри ӗҫҫыннисем.

Чугунҫулӑн Вӑрмар станцинчи рабочисен митингӗнче сцепщик Митрофанов юлташ ҫапла каланӑ:

— Сталин юлташ хӑйӗн докладӗнче железнодорожниксен паха ӗҫне палӑртнӑ. Ҫакӑ вӑл пире, чугунҫул ҫинче ӗҫлекенсене, малашне татах та вӑйлӑнрах ӗҫлеме хавхалантарать. Эпӗ ӗҫрен пушансен кулленех икшер сехет хушши топливо складӗнче ӗҫлеме пулатӑп.

**И. РОМАНОВ,**
**ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.**

### Ӑмӑрту малалла пырать

ҪӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Комбинатри рабочисемпе работницӑсем Сталин юлташӑн Октябрь революцийӗ 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Вӗсем ӑмӑртӑва малалла сарса пырса кулленех ӗҫре паха результатсем кӑтартаҫҫӗ.

Нестеровский юлташ начальник пулса тӑракан цех коллективӗ октябрь уйӑхӗнчи плана 140,4 процент тултарнӑ. Уйрӑм стахановецсенчен коммунист Н. Корнеев юлташ пысӑк ҫитӗнӳ тунӑ, вӑл иртнӗ уйӑхра хӑйне панӑ нормӑна вӑтамран илсен 309 процент тултарнӑ. Слесарьсем Ивановпа Ушмендеров тата Антонов юлташсем те ӗҫ тухӑҫлӑхне иккӗ ҫурӑ хут ытларах ӳстернӗ. Ноябрь уйӑхӗн малтанхи кунӗсенчи ӗҫ результачӗсем те вӗсен паха — Корнеев юлташ Октябрь уявӗ хыҫҫӑн малтанхи икӗ кунра нормӑна 350 процент ытла, Антоновпа Иванов юлташсем—3 норма тултарса ӗҫленӗ.

— Аслӑ Сталин тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма тӑван Хӗрлӗ Ҫара ытларах пулӑшма ыйтать. Ҫулпуҫ сӑмахне эпир кулленех 2—3 ҫын тумалли ӗҫе пурнӑҫласа пынипе ответлетпӗр,—теҫҫӗ патриотсем.

Петров юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ те юлашки вӑхӑтра пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлет. Ҫак кунсенче кунта кашни рабочипе работница ӗҫ нормисене 120 процентран кая мар тултарса ӗҫлет, уйрӑм стахановецсем 4—4,5 норма туса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, Герасимовӑпа Миночкина юлташсем кулленхи нормӑна 465 процент таран тултараҫҫӗ.

**Х. ЛИСИН.**

### Ӗҫҫыннисен патриотизмӗ вӑйланчӗ, ӗҫлес хастарлӑхӗ ӳсрӗ

ЭЛӖК, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче колхозниксен митингӗсемпе пухӑвӗсем пулса иртнӗ. Вӗсенче халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ ноябрӗн 6-мӗшӗнче ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклада сӳтсе-явнӑ, вӑл пухусемпе митингсенче пурӗ 4.650 ҫын ытла пулнӑ.

Сталин юлташӑн приказӗпе докладне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн ӗҫҫыннисен хастарлӑхӗ ӳсрӗ. Аван ҫапса пӗтермелли ҫирӗмкунлӑха хутшӑнса, район икӗ кун хушшинче 330 гектар тыррине ҫапса пуҫтарчӗ. Паянхи куна районри 45 колхоз аван ҫапса пӗтернӗ, ытти колхозсем те аван ҫапас ӗҫе ҫак кунсенчех вӗҫлеҫҫӗ. Ноябрӗн 10-мӗшпе 11-мӗшӗнче Иванкино ялсоветӗнчи «Прожектор» тата «Ҫӗнӗ вӑй» колхозсем 33 лавпа государствӑна 104 центнер тырӑ леҫсе панӑ. Ҫавӑн пекех «Рой», «Хастар» колхоз членӗсем те, хӗрлӗ обозсем организацилесе, хатӗрлев пункчӗсене 57 центнер тырӑ леҫнӗ.

Районри колхозсем Аслӑ уяв тӗлне 1942 ҫулшӑн государствӑна аш-какай парса татнӑччӗ. Сталин юлташӑн доклачӗпе хавхаланса, вӗсем юлашки иккӗ кун хушшинче ҫитес ҫулшӑн 73 центнер аш-какай леҫсе пачӗҫ. Ӗҫҫыннисен патриотизмӗ вӑйланчӗ, ӗҫлес хастарлӑхӗ ӳсрӗ.

**М. ФЕДОТОВ,**
**ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.**

### Шкул валли вутӑ хатӗрлеҫҫӗ

СЕНТЕРВӐРРИ. Шуркассинчи вӑтам шкулта вӗренекенсем кӑҫал шкул валли хӑйсен вӑйӗпе 40 кубометр вутӑ касса хатӗрлерӗҫ. Ҫак ӗҫре уйрӑмӑнах А. Иванова, А. Васильева, Н. Логинов, Н. Алексеев вӗренекенсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Касса хатӗрленӗ вутта вӗренекенсем хӑйсемех турттарса килме пулчӗҫ.

**Н. КОНСТАНТИНОВ.**

## Совет Информаци Бюровӗнчен

### Ноябрӗн 11-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 11-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Ноябрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче войскӑсемпе грузсем тиенӗ 30 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, 2 поезда ҫӗмӗрнӗ, артиллерин 4 батарейине тата 14 миномета пусарса лартнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн темиҫе атакине сирсе янӑ тата нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллеристсемпе минометчиксем 4 оруди, 17 миномет, 23 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн 11 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ. Нимӗҫсен 5 самолетне персе ӳкернӗ. Сталинграда хӳтӗлекенсем хушшинче снайперсен движенийӗ сарӑлса пырать. Старши сержант Тусупов юлташ юлашки кунсенче 18 нимӗҫе вӗлернӗ, красноармеец Увалиев юлташ 10 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре Меркулов юлташ ертсе пыракан подразделенисем противника атакӑланӑ та халӑх пурӑнакан пӗр пунктӑн хӗррине йышӑнса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура гитлеровецсене икӗ рота таран пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ. Кунсӑр пуҫне, пӗр взвод ытла нимӗҫ салтакӗсем хӑйсен ирӗкӗпе Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем активлӑн кӗрешнӗ. Петушков юлташ ертсе пыракан танкистсем противникпа хаяррӑн ҫапӑҫса нимӗҫсен 3 танкне, противотанковӑй орудисен 4 батарейине, минометсен 3 батарейине, пехота ларса пыракан 6 бронетранспорта, 5 ҫӑмӑл машинӑна тата противникӑн пехотине пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре Н-ски чаҫӑн боецӗсем гитлеровецсен икӗ атакине сирсе янӑ, нимӗҫсен 100 салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ, 8 пулеметне, пӗр орудине тата 2 минометне пӗтерсе тӑкнӑ.

Хура тинӗсри флотӑн летчикӗсем тӑшманӑн аэродромне тапӑннӑ. Совет бомбардировщикӗсем хӑйсен тӗллевӗ ҫине пилӗк-ултӑ хут вӗҫсе тухнӑ. Унтан штурмовиксем вӗҫсе пынӑ, вӗсем ҫӗр ҫинчи вӑйсене тата зенитнӑй установкӑсене пыра-пыра ҫапнӑ. Вӗсем хыҫҫӑн транспорт самолечӗсем вӗҫсе пырса ҫӳлӗ мар вырӑнтан парашютистсене антарнӑ. Пирӗн десантниксем ҫӗр ҫине ансан аэродромри самолетсене вут тӗртсе ҫунтарнӑ та тарнӑ. Ҫав операци вӑхӑтӗнче мӗнпурӗ 13 самолета ҫунтарса янӑ, 10 самолета хытах сиенленӗ. Пирӗн десантниксем вара фронт линийӗ урлӑ каҫнӑ та совет войскисем тӑракан вырӑна тухнӑ.

* * *

Курск облаҫӗнчи партизансен икӗ отрячӗ нимӗҫсен чугунҫула хуралласа тӑракан 96 салтакне вӗлернӗ те ҫав чугунҫула 6 километр тӑршшӗнче сирпӗнтере-сирпӗнтере янӑ. Ҫак ӗҫ партизансемпе ҫыхӑну тытнӑ чех салтакне пула, нимӗҫ ҫарӗнчи ҫав салтака пула, ӑнӑҫнӑ. Халӗ ҫав салтак партизансен отрядӗнче, вӑл унта нимӗҫ захватчикӗсемпе активлӑн кӗрешет.

* * *

Белградри радиостанци, гитлеровецсен аллинче тӑраканскер, венгер чӗлхипе—Совет Союзӗнче «ҫӑкӑр нормине кунне 80 грамм таран чакарнӑ», тесе пӗлтернӗ. Совет Информаци Бюровӗ пӗрре Вишири радио ҫавӑн пек суйса каланине сивлесе тӑкнӑччӗ. Кӑҫал, июлӗн 17-мӗшӗнче, Совет Информаци Бюровӗ ҫапла каланӑччӗ: Мускавра пурӑнакан кашни ҫын Берлинри пӗр ҫын, Римри пӗр ҫын тата Вишири пӗр ҫын пӗрле илнӗ чухлӗ ҫӑкӑр илсе тӑрать, тенӗччӗ. Унтанпа ҫӑкӑр памалли норма Мускавра та, Совет Союзӗнчи ытти хуласенче те пӗртте чакман, ҫавӑн пекех юлнӑ. Паян тата ҫапла хушса калама пулать: совет гражданӗсем ҫӑкӑра Венгри халӑхӗ илнинчен 3 хут, 4 хут, 5 хут ытларах илсе тӑраҫҫӗ. Нимӗҫсем Венгрие саратса пӗтернӗ, унтан мӗнпур продовольстви запасӗсене илсе кайнӑ, Венгри халӑхне выҫӑ вилӗмпе вилмелле туса хӑварнӑ. Венгерецсене саратса пӗтерсе, гитлеровецсем халь вӗсене Совет Союзӗнче продовольстви нормисене чакарнӑ тесе суйса йӑпатма пӑхаҫҫӗ. Выҫӑ ларакан венгерецсене апла ҫӑмӑлтарах пулас ҫукки паллах.

### Ноябрӗн 12-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 12-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сирсе тӑнӑ. Хулан заводсем ларакан пайӗнче пирӗн оборона ӑшне савӑлланса кӗме хӑтланнӑ противникӑн атакисене сирсе янӑ. Н-ски чаҫӑн артиллерсчӗсемпе минометчикӗсем нимӗҫсен пехотине икӗ рота таран сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Кӗҫӗн лейтенант Горностаев ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ противник йышӑннӑ уйрӑм ҫуртсене йӗри-тавра ҫавӑрса илнӗ. Пирӗн боецсем гитлеровецсем ҫине гранатӑсем ывӑтса 130 нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре противникӑн икӗ батальон пехоти халӑх пурӑнакан пӗр пунктра пирӗн позицисене атакӑланӑ. Пирӗн артиллерипе пехота гитлеровецсен атакине сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Ҫав ҫапӑҫура противникӑн 400 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлернӗ. Пирӗн боецсем 8 пулемет, пӗр миномет тата 72 винтовка тытса илнӗ. Тепӗр участокра Н-ски чаҫӑн боецӗсем румынсен окопӗсене кӗрсе кайнӑ та 80 салтакпа офицера пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр оруди, виҫӗ пулемет тата икӗ миномет тытса илнӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсен пехотин икӗ батальонӗ, танксем пулӑшса пынипе, пӗр паха пункт патне пымалли вырӑнсене хӳтӗлекен пирӗн чаҫа флангран пырса ҫапса каялла тартма хӑтланнӑ. Совет подразделенийӗсем нимӗҫсен атакине сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 вилӗ таран тата 3 ҫӗмрӗк танк выртса юлнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 440 салтакӗпе офицерне, 8 орудине пӗтерсе тӑкнӑ, 7 дзочӗпе 30 блиндажне ҫӗмӗрнӗ. Н-ски соединени снайперӗсем пӗр уйӑх хушшинче 1.947 нимӗҫе вӗлернӗ. Снайпер Дроздов юлташ 155 гитлеровеца, снайпер Афанасьев юлташ 119 гитлеровеца, снайпер Везбердев юлташ 106 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ фронтӗнче икӗ енӗ те пӗр-пӗрин ҫине артиллерипе тата пӑшалсемпе, пулеметсемпе сайра хутран персе тӑнӑ. Старши лейтенант Коваленко юлташ ертсе пыракан боецсен ушкӑнӗ противникӑн оборонин малти хӗрри патне систермесӗр пынӑ та тӑшманӑн 3 дзотне ҫавӑрса илнӗ. Разведчиксем ҫав дзотсене сирпӗнтерсе янӑ, 20 нимӗҫе ҫити вӗлернӗ, унтан пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таврӑннӑ. Савченко юлташ ертсе пыракан летчик-штурмовиксем тӑшманӑн автоколоннине тапӑннӑ. Грузсем тата чӗрӗ вӑй тиенӗ 15 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Полесье облаҫӗнчи партизансен отрячӗ халӑх пурӑнакан пункта ҫавӑрса илнӗ те унта тӑракан нимӗҫ гарнизонне вӗлерсе тӑкнӑ.

Минск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ вунӑ кун хушшинче нимӗҫсен тӗрлӗ грузсем тиенӗ 107 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн 2 поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушение пула 2 паровоз тата боеприпассемпе ҫар техники тиенӗ 25 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ

* * *

Югослави партизанӗсем наступлени туса Бихач хулине тапӑннӑ. Ҫӗрлехи ҫапӑҫура партизансем укреплениссене татнӑ та хулана кӗрсе кайнӑ. Партизансем ҫав хулара Германие илсе каймалла хатӗрлесе хунӑ 500 вагон кукурузӑпа тулла тытса илнӗ. Патриотсем ҫав продовольствине нимӗҫсемпе итальянец оккупанчӗсен тискерлӗхӗсемпе саратӑвӗсене пула ытларах сиен курнӑ районсенчи халӑхсене валеҫсе параҫҫӗ.

## *Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăх*

### Икĕ кунхи ĕç графикне 128 процент пурнăçланă

КАЛИНИНО, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ пичетленнĕ хаçатсене алла илнĕ хыççăнах районри колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсен митингĕсем пулса иртрĕç. Аслă çулпуçăн историллĕ сăмахĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнче татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума, пĕтĕм вăя, пултарулăха нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкнă çĕре, Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшнă çĕре хума тупа тăваççĕ.

Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхăн иккĕмĕш кунĕнче районри колхозсенче авăн çапас ĕç малалла вăйланса пычĕ. Икĕ кун хушшинче пурĕ 384 гектар çинчи тырра çапса, авăн çапмалли графика район 128 процент тултарчĕ. Ĕнер тракторпа ĕçлекен 6 молотилка, лаша вăйĕпе ĕçлекен 25 молотилка авăн çапрĕç. Авăн çапнă çĕрте пурĕ 2.218 колхозник тимлĕн ĕçлерĕç.

Авăн çапас тата государствăна тырă парса татас ĕçсене уйрăмах Калинин ячĕпе тăракан, «Красноармеец», Кÿлхĕррринчи «Трактор», Шĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем лайăх туса пыраççĕ. Ку колхозсем талăкри ĕç графикне икĕ хут ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхăн малтанхи икĕ кунĕнчи ĕç графикĕсене районри 26 колхоз ирттерсе пурнăçланă.

Анчах та авăн çапас ĕç пур колхозсенче те мар ăнăçлăн пулса пырать. Туçи Мăратри «Клевер», Тушкассинчи «Труд», Астакассинчи КИМ ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапмалли графика пурнăçласа пымаççĕ.

Клевер вăрлăхне шĕкĕлчес ĕç кая юлса пырать. Клевер вăрлăхне пурĕ те 3—4 колхоз çеç çапса илнĕ.

Сталин юлташ доклачĕпе приказне вуланă хыççăн вăйланса пыракан производствăллă çĕкленĕве çирĕплетсе, районри колхозсен ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене хăвăрт вĕçлессишĕн кĕрешмелле.

**А. ИВАНОВ,**
**Калинино райсовет исполкомĕн председателĕ**

### Кая юлса пыракансемпе килĕшсе лараççĕ

Ишлей районĕ ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тырпулсен 83 процентне çапса пуçтарнă, паянхи куна 35 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Анчах çакă вăл районри пур колхозсем те 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене хĕле хăвармасăр ăнăçлăн вĕçлессине пачах та шантармасть.

Хăшпĕр колхозсем фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăха халĕ те кирлĕ пек хутшăнман. Çирĕмкунлăхăн малтанхи икĕ кунĕнчи ĕç графикне район пурнăçлаймарĕ. «Ишлей», «Активист»—пурĕ 6 колхоз вăрлăхлăх акнă клевера уйран халĕ те çулса кĕртмен. Клевер вăрлăхне çапса илессишĕн нумай колхозсенче пачах тăрăшмаççĕ.

Ишлей районĕнчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен çак çитменлĕхсенчен ĕçре халех кирлĕ вывод тумалла. Кая юлса пынине пĕтермелле, колхозниксен массине Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе приказне тĕплĕн ăнлантарса парса, ĕçе лайăхлатмалла.

### МТС-ри пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсем

ТĂВАЙ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, уйрăмăнах политотдел ĕçлеме пуçланăранпа, пирĕн машинно-тракторнăй станцинчи ВКП(б) пуçламĕш организацийĕ хăйĕн ĕçне çĕнетсе урăхлатрĕ. Вăл производствăллă ыйтусене коммунистсен пухăвĕсенче тăтăшах сÿтсе-явать, рабочисемпе служащисен канашлăвĕсемпе пухăвĕсене туса ирттерет, социализмлă ăмăртупа политикăллă-массăллă ĕçе ертсе пырать. Çапла ĕçленипе Тăвай МТС коллективĕ Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине çулталăкри ĕçсен планне, вăл шута авăн çапасси те кĕрет, çĕр процент тултарнипе кĕтсе илчĕ. МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем кăçал 13.640 килограмм горючи перекетленĕ. Унсăр пуçне тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама уйăрса панă укçана 26.200 тенкĕ перекетлесе хăварнă, ĕçĕн хăйне ларакан хакне 16 процент йÿнетнĕ.

Коммунистсем, ĕçре чи лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартса, ыттисене тухăçлăн ĕçлеме хавхалантараççĕ. ВКП(б) членĕ З. Петров юлташ уборкăна тухас умĕн 19 хĕрачана комбайнер помощникĕсем пулма вĕрентсе хатĕрлерĕ. Çав вăхăтрах хăйĕн комбайнне тата тепĕр комбайн моторне юсарĕ. Кăçал вăл хăйĕн помощникĕпе В. Красновăпа пĕрле «Коммунар» комбайн çинче ĕçлерĕ. Вăл 237 гектар тыррине вырса пуçтарчĕ, ĕç планне 215 процент тултарчĕ, 213 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

ВКП(б) членĕ Агрипина Порфиерьва ертсе пыракан хĕрарăм трактористкăсен 3-мĕш номерлĕ бригади çулталăкри ĕçсен планне, авăн çапнипе пĕрле шутласан, ирттерсе тултарнă. Тăваттăмĕш бригадăра ĕçлекен трактористкăсем ВКП(б) членĕ Д. Ермолаева, Е. Петрова юлташсем плана 231 процент тултарнă. Ермолаева юлташ 945 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех ВКП(б) членĕн кандидачĕ Ф. Кузьмин юлташ, çураки планне чылай ирттерсе тултарнăскер, комбайнпа тырă вырмалли плана та 150 процент пурнăça кĕртнĕ. Кунпа пĕрлех вăл хăйĕн 17 çулхи хĕрачине — Нинăна трактор çинче ĕçлеме вĕрентнĕ. Ашшĕ пулăшнипе çамрăк комсомолка Нина Кузьмина çулталăкри ĕçсен планне 179 процент тултарма, 1.694 килограмм горючи перекетлесе хăварма пултарчĕ.

МТС-ра халĕ стахановецсен йышĕ 50 çынран иртет. Пуçламĕш парторганизаци вĕсене кулленхи ĕçре тимлĕн пулăшса тăрать.

МТС-ри чи лайăх стахановецсемпе стахановкăсем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче хăйсен малашнехи кунçулне Ленин—Сталин партийĕпе çыхăнтараççĕ. Çак юлашки вăхăтра çеç пирĕн пуçламĕш парторганизаци партие ретне старши механик И. Яковлев юлташа, трактористка-комсомолкăсене — К. Егорова, И. Иванова юлташсене, трактор бригадин бригадирне С. Потапов юлташа, трактористсене Д. Арапов, А. Баданов юлташсене илнĕ.

ВКП(б) ретне халĕ тата темиçе çын кĕме хатĕрленеççĕ.

Эпир çамрăк коммунистсене политикăллă воспитани парас ыйтăва та манса хăвармастпăр: вĕсем валли кружоксем организацилерĕмĕр, тăтăшах пухусемпе семинарсем ирттеретпĕр, вĕсене партиллĕ поручениесем паратпăр, çав поручениесене пурнăça мĕнле кĕртнине тĕрĕслетпĕр.

**В. ЧЕРНОВ,**
**МТС политотделĕн начальникĕ.**

*Пирĕн земляксем*

## СЕРЖАНТ ЗАХАРОВ

Фронта тухса каякансене пĕтĕм колхозпа ăсатнă. Чăвашсен йăлипе, укăлча хапхи хыçĕнче ăсату сăмахĕсем пуçланнă. Шурă сухаллă стариксем пулас боецсене ял халăхĕн ячĕпе çирĕп наказ парса янă.

— Ырă сунатпăр сире, ывăлăмăрсем! Ирсĕр тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерĕр, ăна совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларăр! Чăвашсен таса ятне ан варалăр. Эпир нихăçан та чурасем пулман, пулмастпăр та... Хăюллăн çапăçăр, тăшмана ăнсăртран пырса çапăр—сире пĕтĕм çĕршыв мухтамалла пултăр!

Тракторист, бригадир, колхозăн чи активлă çынни Гурий Захаров ответлă сăмах каланă.

— Ан иккĕленĕр, пирĕн çинчен усал сăмах илтеймĕр, — тесе шантарса каланă вăл ял-йышĕсене, — эпир Сталин хушнă пек тата эсир, хамăр тăвансемпе çывăх тусcем, хушнă пек çапăçăпăр. Ирсĕр нимĕçе хăваласа ятратпăр, ăна хамăр çĕре мăшкăл тума памастпăр... Наградăсем илсе таврăнатпăр!

Сержант Гурий Захаров халăх умĕнче çапла тупа тунине фронтра пĕр минутăлăха та манман. Унта минометчик пулса пырса, вăл хăй тупа тунине пирвайхи кунранах пурнăça кĕртме тытăннă: нимĕçсене нихăçан та вĕçертмен, минăсем хурса фашистсене татăкăн-татăкăн сывлăшалла сирпĕнтерсе янă. Минăмета уçă позицире майлаштарса лартса, вăл малтанхи çапăçурах тăшман батарейине пусарса лартнă. Иккĕмĕш çапăçура тăшманăн боеприпассем

тиенĕ икĕ лавне сывлăша сирпĕтнĕ. виççĕмĕшĕнче вара — тăшманăн пулеметнăй точкине пусарса лартнă. Çапла иртнĕ кун хыççăн кун. Вăл пирĕн чаçра ăна организацилене кунран пуçласа паянхи кунччене пулса, унăн çапăçури çулне утса тухрĕ, кашни çапăçурах нимĕçсене пĕтерсе пычĕ, совет çĕрне нимĕçсенчен тасатма тăрăшрĕ.

Д. ялĕ патĕнче пынă çапăçусенче Захаров юлташăн сасартăк мина запасĕ пĕтсе çитнĕ. Вăл çухалса кайман, аллине винтовка тытнă та 15 минометчике хăй хыççăн илсе кайса, пехотинецсене пулăшма ыткăннă. Вĕсем дзотсене штурмланă, блиндажсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕнĕ, нимĕçсене тыткăна илнĕ. Хаяр çапăçу хыççăн ял каллех пирĕн алла куçнă.

Çак çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн правительство ăна «За отвагу» медальпе награтăланă. Тăван колхозĕнче ăна награтăлани çинчен пĕлсен, Захаров юлташ патне почта хавасла та ăшă кăмăллă вуншар çырусем илсе çитернĕ.

— Эсĕ хăвăн сăмахна пурнăçларăн,— çырнă ун патне ял-йышĕсем, — мухтав сана! Эпир те кунта çĕнтерÿ тăвассишĕн фронтри пекех ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

Захаров юлташа февраль уйăхĕнче ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ, июль уйăхĕнче вăл парти членĕ пулса тăнă. Унăн авторитечĕ кунран-кун ÿссе пынă, вăл агитатор пулса ĕçлеме тытăннă.

Захаров калаçусене çăмăл та ăнланмалла чĕлхепе ирттерет. Ку ĕçре вăл хаçатсемпе, кĕнекесемпе, тăванĕсенчен илекен çырусемпе усă курать, çавăнпа унăн калаçăвĕсем яланах витĕмлĕ пулаççĕ. Боецсем ăна юратаççĕ, хисеплеççĕ, ĕненеççĕ.

Çакăн пек вăрçать тата ĕçлет чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ сержант Гурий Захаров.

Вăл хăй тупа тунине чыслăн пурнăçлать, — нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕррипе аркатса тăкас ĕçе пĕтĕм вăйне парать.

**Кĕçĕн лейтенант Л. АГАКОВ.**
ДЕЙСТВУЮЩИ ХĔРЛĔ ÇАР.

## *ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ*

### Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç активлăн кĕрешеççĕ, противника техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Артиллери пенипе нимĕçсен 21 танкне çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă. Çакăн пек трофейăсем: нимĕçсен юсавлă 7 танкне, 3 орудине, 2 бронемашинине, снарядсем тиенĕ пĕр машинине, 6 кĕпçеллĕ минометне тата штаб машинине паха документсемпе пĕрлех тытса илнĕ.

Участоксенчен пĕринче нимĕçсем атака тума хăтланнă. Тăшманăн пехотине танксем пулăшса пынă. Атакăлакан тăшмана совет боецĕсем çирĕппĕн тăрса кĕтсе илнĕ, унтан, контратакăна куçса, противника малтанхи позицисем патнех сирсе пăрахнă.

Сталин юлташăн сăмахĕпе тата приказĕпе хавхаланнă боецсем нимĕçсене пысăк çухатусем кÿреççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна вĕсем темиçе çĕр гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Бушев командирăн подразделенийĕ хÿтĕлесе тăракан позицисене нимĕçсем темиçе вуншар танкпа атакăланă. Пĕр красноармеец та хăйĕн позицине пăрахса кайман. Тăшманăн танкĕсене артиллеристсемпе бронебойщиксем вăйлă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ. Темиçе машина çухатса, нимĕçсем ăнăçу тăваймасăрах каялла чакнă.

### Гитлеровецсем хăйсен салтакĕсем пăсăлса каяссинчен хăраççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕç салтакĕсем хушшинче, уйрăмах резервистсем хушшинче, гитлерла Германия çĕнтересси пирки иккĕленни ытларах та ытларах сарăлса пырать. Нимĕçсен 14-мĕш мотомехдивизийĕн 53-мĕш полкĕнче çав шухăш-кăмăлсем çавтери анлăн сарăлса кайнă пирки, полк командирĕн, офицерсене чĕнсе, ятарласа приказ кăларма лекнĕ. Приказра çапла каланă:

«Полка çамрăк йыш нумай хутшăнни полкшăн питех те пысăк хăрушлăх кÿрет, уйрăмах—салтакăн тивĕçлĕхне пурнăça кĕртме кирлине пĕтĕмĕшпех ăнланма пăрахас хăрушлăх, çапла вара пирĕн часть арканса каяс хăрушлăх пысăк. Çакна ăна тĕрлĕ начар паллăсем кăтартса параççĕ. Çав хăрушлăха сирсе ярасси—чи малтан, старши офицерсен, унтер-офицерсен, ватă салтаксен задачи пулса тăрать. Çав задачăна ăна çирĕплĕх çукки палăрсан кашнинчех вăйлă наступлени тунипе татса пама пулать.

Августăн 7-мĕшĕнче 9-мĕш ротăри салтак Бернер çапла каланă: «Малти позицире тăрасси пурне те мăй таранах тăрантарса çитерчĕ», тенĕ. Эпĕ çав çынна арестлесе полевой суд аллине пама хушрăм... Çав сăмахсене мана куçăн каланă пулсан, эпĕ вăл çынна персе пăрахнă пулăттăм», тенĕ приказра.

### Цех коллективĕн ăмăрту результачĕ

Пирĕн цех коллективĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнине çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илес тесе, хăйĕн умне кашни уйăхрах планран ирттерсе продукци туса кăларас, çирĕп график тăрăх ĕçлес задача лартнăччĕ.

Рабочисем хушшинче ăмăртăва тĕрĕс организацилесе сарса пынă май, хамăр умма лартнă задачăна эпир тивĕçлипе пурнăçларăмăр. Пирĕн цех ултăмĕш уйăх ĕнтĕ хăйне панă плана йĕркеллĕн тултарса пырать. Продукцие эпир çирĕп график тăрăх туса кăларатпăр, ку таранччен пирĕн вунăкунлăхри графика пăсни пĕрре те пулман.

Пĕр уйăх каялла пирĕн цехра нормăна тултарайман рабочисем пулнă. Юлашки вăхăтра вĕсем, квалификацилле рабочисем пулăшнипе, нормăсене ирттерсе тултарма пуçларĕç. Çапла вара эпир Октябрьти революцин 25-мĕш çулне иртнĕ уйăхри программăна ирттерсе тултарнипе тата пур рабочисене те ĕç нормисене тултарса ĕçлекен тунипе кĕтсе илтĕмĕр. Рабочисенчен сурринех ыхăн двухсотниксемпе трехсотниксем, пятисотниксем шутланаççĕ.

Тухăçлă ĕçлекенсенчен уйрăмах çак юлташсене палăртмалла: малярсем Пелагея Миночкинăпа Анна Ипатова, сборщица Ольга Китаева, столяр Ольга Карасева, комсорг Ольга Иванова т. ыт. те. Вĕсем октябрь уйăхĕнче кашниех хăйсен нормисене 350—400 процент, уйрăм кунсенче 500 процент тултарса ĕçлерĕç.

ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă Николай Салмин уйăх каялла нормăна тултарса пырайман, юлашки вунă кун хушшинче вăл та пысăк улшăну турĕ, кулленхи нормăна 2 хут ытла тултарса ĕçлеме пуçларĕ. Унпа юнашар ĕçлекенсем, Федоровăпа Никонов юлташсем те кулленех 2—3 норма тултараççĕ.

Уйрăм мастерсем рабочисене тухăçлăн ĕçлеме куллен пулăшса пыраççĕ. Сăмахран, Васильевпа Егоров юлташсем яланах хăйсен сменине валли кирлĕ чухлĕ материалсем, инструментсем хатĕрлеççĕ, ĕç вăхăтĕнче кăлтăк пулсан, ăна хăвăртрах пĕтереççĕ. Ку çеç мар, уйрăм рабочисене вĕсем хăйсем ĕçлесе кăтартнипе конкретлă пулăшу параççĕ, тепĕр чухне тата смена пĕтнĕ хыççăн чылай вăхăт хушши цеха юлса ĕçлеççĕ.

Пирĕн цехри рабочисем малашне ĕçри хăвăртлăхсене татах та ÿстерсе пыма пулаççĕ. Продукцие çирĕп график тăрăх туса кăларасси—пирĕншĕн яланах çирĕп закон пулса тăрать.

**В. ДАНИЛОВ,**
**Çĕмĕрле комбинатĕнчи сборочнăй цех начальникĕ.**

### ĔÇÇЫННИСЕМПЕ ХĔРЛĔ ÇАРШĂН ТĂРĂШСА

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ Караньялĕнчи «Труд» промартель производствăллă çĕнĕ çитĕнÿ турĕ: тăваттăмĕш кварталти ĕç планне ноябрĕн 5-мĕшĕнче тултарчĕ. Артель коллективĕ вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлет. Кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче вăл пĕлтĕрхинчен 3 хут нумайрах тавар туса кăларчĕ, çулталăкри плана 155 процент тултарчĕ.

Артель коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăра çĕршыв валли çулталăкри планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх тавар туса кăларма пулчĕ. Халĕ эпир çак обязательствăна тимлĕн пурнăçласа пыратпăр. Рабочисемпе работницăсем кашни сменăра ĕçлеме пуçларĕç. Унсăр пуçне артель çĕнĕ производствăсем организацилерĕ: тир-сăран тата ут тасрашĕсем тăвать. Октябрь уйăхĕнче, сăмахран, пин мăшăра яхăн хăмăт пăявĕ туса кăларнă.

Вăрçă кунĕсенчи хĕрÿ ĕçре артельре ударниксемпе стахановецсен йышĕ ÿссе пырать. Ватă стахановецсем уйрăмах пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Опытлă стахановецсем Григорьев, Алексеев юлташсем иртнĕ уйăхри нормăна 400-шер процент тултарчĕç.

**И. МОКЕЕВ,**
**Артель правленийĕн председателĕ.**

### Тасалăхшăн кĕрешни çук

КАЛИНИНО. Райцентри столовăйра тасалăхпа йĕркелĕхшĕн пачах та кĕрешмеççĕ. Кухня юсавлă мар пирки тата апатланма çÿрекенсем чĕлĕм туртнă пирки пÿлĕмре пĕрмаях тĕтĕм йăсăрланса тăрать, урайĕнче сÿп-çап, апат юлашкисем сапаланса выртаççĕ. Официанткăсен çавăрăнăçусăрлăхне пула час-часах шăлса тасатман сĕтел çинче апатланма тивет. Чашăксем ăшĕнче улăм пĕрчисем, мунчала таткисем тухни те пулать. Анчах та столовăй заведующийĕ Романов юлташ çак çитменлĕхсене пĕтерес тесе нимĕн те тумасть.

**Б. ШОРНИКОВ.**

## *Ют çĕршывсенче*

### ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕМ ВИШИНЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Виширен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Германи войскисем Вишине пырса çитнĕ.

### ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕН ПОДВОДНĂЙ ФЛОЧĔ ТУНĂ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа тĕнĕл держависен 570 подводнăй лодкине путарнă, е сиенленĕ, е тытса илнĕ.

### ИТАЛИ ВОЙСКИСЕМ НИЦЦĂНА ПЫРСА КĔНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян 15 сехетре Итали войскисем Ниццăна пырса кĕнĕ.

### ГЕНУЯПА СПЕЦИЯ ХУШШИНЧИ РАЙОНРАН ХАЛĂХА ЫТТИ ÇĔРЕ КУÇАРНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Муссолини хушнипе Генуяпа Специя хушшинчи тинĕс çумĕнчи пĕтĕм районран халăха ытти çĕре куçарнă.

### Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтернĕ: Америка войскисем Сафие, Могадора тата Агадира (Марокко çыранĕнче, Касабланкăран кăнтăртарахра) тата Федала (Касабланкăран çурçĕртерехре) пырса аннă. Америкăн 1000 çынлă отрячĕ Себуран çурçĕртерехре (Рабатран çурçĕртерехре) аннă. Орана çавăрса илнĕ унка хĕсĕнсе пырать.

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радио çакна йышăннă: Америка войскисем, Тунис чиккинчен 100 мильăра ларакан Филиппивилле аннăскерсем, малалла куçса пыраççĕ. Америка войскисем Лиоте тата Мехедиа порчĕсене тытса илнĕ. Касабланка таврашĕнче çапăçусем пыраççĕ, унта Америкăн танковăй чаçĕсем те çапăçаççĕ.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Алжира пынă генерал Жиро французсен движенине ертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ; çав движенин тĕллевĕ — тĕнĕл держависен Çурçĕр Африкăра тăвас агрессине сирсе ярасси пулса тăрать. Жиро французсен Çурçĕр Африкăри çарне тăвать, çав çар пĕрлешнĕ нацисем майлă кĕрешмелле, Германипе Италие аркатса тăкас тата Францие унăн империне ирĕке кăларас тесе кĕрешмелле.

Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви французсен çав çĕнĕ çарне хĕçпăшалсем тата çар хатĕрĕсем парса тăма пулнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Вишин тинĕс-çар флочĕн Касабланка патĕнчи çапăçура пулнă çăмăл карапĕсене пĕтерсе тăкнă. «Жанна д'Арк» линкор çинче пушар тухнă. Францин пĕр крейсерне хытă сиенленĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: Орана илни тĕрĕссипе Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвеланăçĕнчи пайĕнче туса ирттерекен кампани вĕçленнине пĕлтерет, вăл пĕрлешнĕ нацисене тĕнĕл держависене хирĕç хĕвелтухăçнерехре çапăçмашкăн вăйсем пухма май парать.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: американецсем Алжирта тĕнĕл держависен подданнăйĕсене пурне те арестленĕ. Француз халăхĕ Америка войскисене ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Алжирти француз халăхĕн пысăк пайĕ американецсемпе çыхăнса ĕçлет. Перемирие Америка войскисем пырса анни 16 сехет иртсен тунă.

### ДАРЛАН АДМИРАЛ ТАТА ЖЮЭН ГЕНЕРАЛ АМЕРИКАНЕЦСЕНЕ ТЫТКĂНА ПАРĂННĂ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра Парижран çакăн пек пĕлтернине пичетленĕ: Африкăна Виши войскисен командующийĕ пулма кайнă адмирал Дарлан, халĕ официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсене тыткăна парăннă. Вишин Çурçĕр Африкăри войскисен главнокомандующийĕ Жюэн генерал та тыткăна парăннă.

### АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ТУНИСА ПЫРСА КĔНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка войскисем ноябрĕн 10-мĕшĕнче ирхине Тунис территорине кĕнĕ. Французсем вĕсене сахал хирĕç тăнă. Америка войскисем Бизертăпа Тунис хули еннелле куçса пыраççĕ.

### АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ОРАНА ПЫРСА КĔНĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви çапла пĕлтерет: 11 сехет те 45 минутăра Америка танкĕсем Орана кĕнĕ. Десантлă вăйсем Санта Крутц высотипе фортне оккупациленĕ.

### АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ РАБАТА ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рабата Америка войскисем йышăнса илнĕ.

### АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ ÇУРÇĔР АФРИКĂНА ПЫРСА АННĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Лондонра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Çурçĕр Африкăна пырса аннă.

### ГЕРМАНИН ДЕСАНЧĔСЕМ ТУНИСРА

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен командованийĕн представителĕ Лондонра—Германи войскисем Туниса анни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсенчен пĕр пайне сывлăш çулĕсемпе илсе пынă пулнă. Çав войскăсем мĕн чухлĕ пулни çинчен тата вĕсем ăçта анса ларни çинчен калакан даннăйсем халлĕхе çук-ха.

### РУЗВЕЛЬТ ПОСЛАНИЙĔ ÇИНЕ ФРАНКО ТАТА КАРМОНА ОТВЕТ ПАНĂ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС) Рузвельтăн секретарĕ Эрли пичет представителĕсене—Франко тата Португали президенчĕ Кармона Рузвельт посланийĕ çине çителĕклĕ ответ пани çинчен пĕлтернĕ. Анчах та халлĕхе официальнăй ответ илеймен-ха.

### Англин Египетри наступленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Египетри фронтра çаплах наступлени туса пыраççĕ. Халĕ Ливипе Египет чикки районне хытă асăрхаççĕ, унта противник хирĕç тăма хăтланма пултарать. Англи авиацийĕ тăшманăн транспорт колоннисене атакăлать.

Англи хаçачĕсен корреспонденчĕсем çапла пĕлтереççĕ: Англи истребителĕсемпе бомбардировщикĕсем халь каялла чакса пыракан противника çĕнĕ аэродромсенчен, ĕлĕкрех Италипе Германи войскисен аллинче тăнăскерсенчен, вĕçсе тухса атакăлаççĕ.

Ноябрĕн 8-мĕшĕнче 3.000 итальянеца тыткăна илнĕ. Англичансемпе хирĕç пулсан, тĕнĕл çĕршывĕсен пиншер салтакĕсем тыткăна парăнаççĕ.

Итальянецсен «Фольгоре» ятлă дивизийĕн командующине Фраттини генерала «Брешиа» ятлă дивизин фронтăн кăнтăрти секторĕнчен тарнă командующийĕпе тата ытти офицерсемпе пĕрле тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: тинĕс çумĕнчи çулпа пыракан импери войскисем ĕнер противника Сиди-Барраниран хăваласа кăларнă та Баккбакра унăн хыçалти чаçĕсемпе çапăçма тытăннă. Трофейăсемпе тыткăна илнĕ салтаксене шута илесси малалла пырать. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки темиçе кун хушшинче çунă вăйлă çумăрсем Роммелĕн вăйĕсене каялла чакма тата ытларах кансĕрлеççĕ. Каялла чакакан войскăсем çулсем çинче грузовиксемпе çăмăл автомашинăсем нумай пăрахса хăвараççĕ тата продовольстви запасĕсем нумай хăвараççĕ.

### АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ КАИРА ПЫНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем 7.000 çынна яхăн Каира пынă.

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**


ЧУВАШСКИМ ОТДЕЛЕНИЕМ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ с 1-го ноября 1942 г. организованы сдаточно-скупочные пункты для приема и скупки от населения годного к употреблению или ремонту медицинского инструментария и медоборудования в следующих пунктах: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 4, МАГАЗИН САНГИГИЕНЫ; г. Алатырь, улица Ленина, дом № 46, Аптека № 1.
ЧУВАШСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ. 3—1

СТАНЦИЯ ПЕРЕЛИВАНИЯ КРОВИ в неограниченном количестве принимает доноров всех групп.
Адрес: Чувашская ул., дом 22. 3—1

**Особое проектно-монтажное Управление № 5 „Центроэлектромонтаж", участок № 6**

в гор. Чебоксарах производит набор учеников на курсы электромонтеров.

На курсы принимаются мужчины и женщины в возрасте от 15 до 35 лет.

Курсанты обеспечиваются стипендией в размере 150—200 руб. в месяц.

Обращаться: Чувашская ул. д. № 66, поселок Водосвета, „Центроэлектромонтаж" (около продуктового ларька Водосвета).
2—1



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11596 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. б. 52 84 л. л.